NIX
Н
КОМ
СУП

п. Ибреси,
ул. Садовая, д. 7
/Дом быта/,
2 этаж, телефон:
2-22-62.
КРЕДИТ
www.nix.ru

Йĕпреç районĕн хаçачĕ

# ÇĔНТЕРӲШĔН

Шăматкун
2007 ç., çу, 5

35 /8953/№

Хаçат 1932 çултанпа
тухса тăрать
Хакĕ ирĕклĕ

электронлă адрес:
ibresi@press.cap.ru

## ÇĔНĔ АВТОМАШИНĂСЕМ ПАРНЕЛЕНĔ

Иртнĕ эрнере, Пушар хуралĕн уявĕ умĕн, Чăваш Ен Президенчĕ Н. Федоров Патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕсене çичĕ ВАЗ-21041 автомобиль уççисене панă. Пушар сӳнтерекен службăн штабне тулли приводлă УАЗ автомашина парнеленĕ. Çĕнĕ йышши оборудовани вырнаçтарнă КамАЗа вара Сĕнтĕрвăрринчи пушар сӳнтерекенсене пама йышăннă. Президент çавăн пекех пушар техникин тата çăлав хатĕрĕсен куравĕнче пулнă.

## ХИСЕП ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАНĂ

Обществăлла йĕркелĕх хуралĕнче чылай çул тӳрĕ кăмăлпа службăра тăнăшăн Йĕпреç районĕнчи шалти ĕçсен пайĕн патрульпе пост службин милиционер-водительне **Юрий Николаевич БОЛЬШОВА** Йĕпреç районĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

АСТĂВĂМ ТУРНИРĔ



## ХĔРĔХМĔШ, ЮБИЛЕЙЛĂ...

**Хăйсен вăхăтĕнче Тăван çĕршывăн спорт арени çинче чаплă çитĕнӳсем тунă мухтавлă ентешсене халалласа районта нумай-нумай ăмăрту иртереççĕ. Вĕсен хушшинче уйрăмах палăрса тăраканни вăл – Тимофей Петрова асăнса Хыркасси – Йĕпреç çулпа чупакан çăмăл атлетсен тупăшăвĕ. Тимофей Петров Хыркасси ялĕнче çуралса ӳснĕ, республикăри, Раççейри, Совет Союзĕнчи чылай ăмăртусен çĕнтерӳçи, ялти спортсменсен хушшинче çĕршыв чемпионĕ ятне çĕнсе илнĕ çын. Вăл стадионсенче тунă ӳсĕмсем паян та спорта кăмăллакансене калаçтараççĕ, хăшĕсем вĕсен çывăхне те пыма пултараймаççĕ.**

/Вĕçĕ 5-мĕш стр./.

## РАЙХАÇАТ ПРИЗĔСЕМШĔН – ÇĂМĂЛ АТЛЕТСЕН ЭСТАФЕТИ



**Кăçалхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче Йĕпреç поселокĕнчи тĕп площадьре Йĕпреç районĕн «Çĕнтерӳшĕн» хаçачĕн призĕсене çĕнсе илессишĕн тата Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 62 çул çитнĕ ятпа çăмăл атлетсен эстафетине иртереççĕ.**

Эстафетăна предприятисемпе организацисен тата учрежденисен, хула тата ял тăрăхĕсен, пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам тата тĕп шкулсен командисем хутшăнаççĕ.

Призсене çĕнсе илессишĕн 3 ушкăнпа çитĕннисем, аслă тата вăтам классенче вĕренекенсем ăмăртаççĕ. Кашни командăра 3 арçын е арçын ача тата 3 хĕрарăм е хĕр ача – пĕтĕмпе 6 çын пулмалла.

Хăйсен ушкăнĕсенче 1-3 вырăнсене йышăннă командăсене медальсем тата дипломсем парса чыслаççĕ, çĕнтерӳçĕсене район хаçачĕн куçса çӳрекен кубокĕсемпе наградăлаççĕ. Чи лайăх кăтарту тунă команда членĕсене «Çĕнтерӳшĕн» хаçата 2007 çулхи 2-мĕш çур çул валли çырăнтарса параççĕ.

Эстафета 9 сехет те 30 минутра пуçланать.

***ЙĔРКЕЛӲ КОМИТЕЧĔ.***

## ÇУРАКИ ВĂЙ ИЛЕТ, САРĂЛАТЬ

Калинин ячĕллĕ ЯХПКн техника паркĕнче çуракине хутшăнакан ял хуçалăх машинисен юсавлăхне тĕрĕслеме килнĕ комисси членĕсене кунти механизаторсем паян тесен паянах ака-суха ĕçĕсене пуçăнма хатĕр пулни çинчен пĕлтернĕччĕ. Унтанпа сисĕнмесĕрех икĕ эрне иртсе кайрĕ. Çанталăк çĕр ĕçченĕсене уй-хире вăхăтра тухма чăрмантарчĕ: темиçе талăк çумăр çуса тăчĕ, хушăран юр пĕрчисем те вĕçкелерĕç. «Пĕтĕм лаптăк çинче çĕр пиçсе çитессе кĕтсе тămарăмăр, сӳре агрегачĕсене чи малтан нумай çул ӳсекен курăксен пуссине илсе тухрăмăр. Кĕр калчисене апатлантартăмăр. Кĕркунне çĕртме тунă лаптăксенче нӳрĕк тытса хăвартăмăр», – çапла пĕлтерчĕ редакцие асăннă кооператив ертӳçи Ю. Н. Ижендеев.

Эйпеçсем ака уйăхĕн 26-мĕшĕнчех сеялкăллă агрегатсене паркран çурхи тулă йышăнакан уя илсе тухнă. Çак культурăна пĕрремĕш кунах 10 гектар çине варăнтарнă.

Çĕр ĕçченĕшĕн кану вăхăчĕ çук. Çу уйăхĕн пĕрремĕш кунĕсенче ытти граждансем Конституци кӳнĕ правапа усă курнă пулсан, тыр-пул ăстисемшĕн вĕсем кăçалхи тухăçшăн кĕрешмелли чи хĕрӳ вăхăт пулчĕç. Çак тапхăрта механизаторсем хăйсене шанса панă агрегатсене уйрăмах тухăçлă ĕçлеттерчĕç. Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн пресс-службине çу уйăхĕн 3-мĕшĕ тĕлне килнĕ кăтартусенчен çакă курăнать: Калинин ячĕллĕ ЯХПК ака пуçланнăранпа çурхи культурăсене 75 гектар çинче акнă.

Районти ытти хуçалăхсенче те çурхи уй-хир ĕçĕсем сарăлсах пыраççĕ. Ильич ячĕллĕ, «Красный партизан», «Патман», «Красный фронтовик» колхозсенче акана вăхăтра тата лайăх пахалăхпа иртерсе ярассишĕн тимлени уçăмлăн палăрать. Кунпа пĕрлех çĕнĕрен йĕркеленнĕ кооперативсемпе фермер (хресчен) хуçалăхĕсем те тĕрĕслевре ăнăçлă тухас тĕллевлĕ. Вĕсен шанăçне «АПК аталанăвĕ» приоритетлă наци проектне çул пани палăрмаллах ӳстерет.

***Г. ВАСИЛЬЕВ.***

## ЙĔПРЕÇ ЕН: КУН ХЫÇÇĂН КУН

### ИККĔМĔШ ВЫРĂНА ТУХНĂ

Çак кунсенче Чăвашпотребсоюз потребительсен кооперацийĕн ĕçченĕсем хушшинче йĕркеленĕ физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли 5-мĕш спартакиада шайĕнче сĕтел çинчи теннис енĕпе ăмăрту иртнĕ. Çивĕч кĕрешӳре Йĕпреç райповĕн чысне хӳтĕленĕ Надежда Терентьева хĕрарăмсем хушшинче пĕрремĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Надя Пучинкери апат-çимĕç магазинĕн ертӳçи пулса ĕçлет. Арçынсен тупăшăвĕнче Николай Мурзаев водитель тăваттăмĕш вырăн йышăннă. Пĕтĕмĕшле кăтартусемпе пирĕн райпо команди иккĕмĕш вырăна тухнă.

***/ХАМĂР ИНФ./.***

### КОНФЕРЕНЦИРЕН – ДИПЛОМПА

Апрелĕн 20-мĕшĕнче Шупашкарти ачасемпе çамрăксен пултарулăх керменĕнче республикăри шкулсенче вĕренекен ачасен «Excelsior» конференци-фестивалĕ иртнĕ. Унта хутшăнса Пучинкери вăтам шкулти 11-мĕш класра вĕренекен Дима Михайловăн «Агропромышленноç комплексĕн аталанăвĕ «Красный партизан» колхоз тĕслĕхĕ çинче» темăпа çырнă наука ĕçĕ 18 ĕç хушшинче 3-мĕш вырăна тивĕç пулнă. Димăна наука енĕпе ертсе пыраканĕ çак шкулти географи предметне вĕрентекен Светлана Алексеевна Иванова учительница пулнă.

Дима Михайлов географи предметне питĕ юратать. Кунашкал наукăпа-практика конференцийĕсене темиçе хутчен те хутшăннă вăл, анчах ку таранччен кун пек пысăк çитĕнӳ туни пулманччĕ-ха. Ку хутĕнче телей фортуни ун еннелле çаврăнчĕ. Вăл конференцирен çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăмпа таврăнчĕ, аллинче – ЧР Вĕрентӳпе çамрăксен политика министерствин наградиi – 3-мĕш степеньлĕ диплом, татах та тăрăшуллăрах вĕренме хавхалантаракан асамлă вăй.

***/ХАМĂР ИНФ./.***

### ВИÇÇĔШĔН ĔÇĔСЕМ ТЕ ИЛĔРТӲЛЛĔ

Республикăн тĕп хулинче «Бизнес-инкубатор» ООО çуртĕнче алĕç ăстисен черетлĕ куравĕ уçăлчĕ. Ăна Чăваш Республикинчи Экономика аталанăвĕн тата суту-илӳ министерстви иртерет. Курава хутшăнма пирĕн районти халăх таланчĕсем те кăмăл турĕç. Йĕпреçри Пултарулăх çуртĕнче ĕçлекен Евгения Давыдова пусма-тавартан юлакан татăк-кĕсĕкпе те усă курма пĕлет иккен. Вăл хăй ăсталанă пĕчĕк кавирсене, стена çине çакмалли панносене çак курава тăратрĕ.

Йĕпреçри пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкулти Татьяна Яковлева вожатăй пушă вăхăтра хурăн хуппинчен тĕрлĕ япала тума юратать. Унăн тăпăл-тăпăл савăчĕсене кирек кам та кăмăлласа туянмалла. Çырла-кăмпа татакансемшĕн вĕсем питех те меллĕ. Пуракĕсене Татьяна Валерьевна тĕрĕ-эрешпе илемлетсе тунă. Шупашкарсем те вĕсене лайăх хак парасса шанатпăр.

Пучинкери вăтам шкулта вĕрентекен Зоя Акчурина вара вĕтĕ шăрçасене «ĕçе кĕртсе» мĕн кăна ăсталамасть-ши? Вăл чăваш тĕрри-эрешĕпе илемлетнĕ пĕчĕк сăмса тутрисен шучĕ те çук. Ытти япаласем те çыпăçуллă пулса тухаççĕ Зоя Алексеевнан.

Йĕпреçри этнографи музейĕ çак 3 ăстаçăн ĕçĕсене республика шайĕпе иртекен куравра кăтартма суйласа илчĕ.

***Г. ВАСИЛЬЕВ.***

## ВАСКĂР, РАЙОН ХЫПАРÇИСĔР АН ЮЛĂР!

**Хаклă вулаканăмăр! «Çĕнтерӳшĕн» хаçата 2007 çулхи 2-мĕш çур çул валли çак хаксемпе çырăнса илме пулать:**

**çыхăну уйрăмĕсенче – 152 тенкĕ те 46 пуспа;**

**«Чăвашпичет» АУО киоскĕнче – 120 тенкĕпе;**

**хаçат редакцийĕнче /альтернативлă майпа/ – 105 тенкĕпе.**

# ПУТИНĂН САЛАМĔСЕНЕ РАÇÇЕЙ ПОЧТИ ВЕТЕРАНСЕМ ПАТНЕ ÇИТЕРЕТ

Раççей Президенчĕ Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе янă саламлă çырусене Раççей почти кашни çулах Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕсене çитерсе парать.

Чăваш Ене В. В. Путинран ветерансем патне янă 66156 çыру çитнĕ. Вĕсенчен 16846 саламне Шупашкарта пурăнакан ветерансене çитерсе памалла. Саламлă çырусене валеçме çу уйăхĕн 3-мĕшĕнче тытăннă. Çак ĕç çу уйăхĕн 9-мĕшĕчченех пырать.

«Раççей Президенчĕ пире шанни – пирĕншĕн çав тери пысăк чыс тата çакă патшалăх почтин шанчăклăхĕн кăтартăвĕ, – çапла палăртнă федераци почта çыхăнăвĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн – «Раççей Почти» ФПУП филиалĕн директорĕ С. Т. Тимофеева. – Саламсене леçесси – пирĕншĕн питĕ яваплă тата çав вăхăтрах пархатарлă ĕç те. Хам ятпа тата республикăри мĕнпур почта ĕçченĕсен ячĕпе хамăрăн хисеплĕ ветерансене Аслă Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе саламласа, вĕсене, тăванĕсемпе çывăх çыннисене сывлăх, вăрăм ĕмĕр, юрату сунас килет».

# СУМЛĂ ТӲПЕ ХЫВНĂ

Ака уйăхĕн 26-28-мĕш кунĕсенче Кирово-Чепецк хулинче кире пуканĕ йăтакансен Раççейĕн Европа тăрăхĕнчи чемпионачĕ иртнĕ. Чăваш Енĕн пĕрлештернĕ командинчи 7 çынран виççĕшĕ Пучинкерен. Вĕсенчен чи çамрăкки – Артем Васильев (80 кг). Вăл пĕлтĕр вăтам шкул пĕтернĕччĕ. Артем ял хуçалăх академийĕнче вĕренет. Пучинке каччи пĕлтĕр тĕнче чемпионĕ пулнă. Ун чухне вăл 18 çултан кĕçĕнрех атлетсемпе тупăшнăччĕ. Ку хутĕнче Артем çитĕннисемпе юнашар тăрса ăмăртнă. 32 килограмлă икĕ кире пуканне кăкăр çинчен 87 хут тĕртнĕ, икĕ енлĕ кĕрешӳре 142 очко пухса спорт мастерĕн виçине ирттерсе тултарнă. Пучинке тăрăхĕнчен кире пуканĕ йăтса спорт мастерĕ пулнисенчен вăл виççĕмĕш. Çак виçерех ăмăртнă Александр Семенов спорт мастерĕн виçине пĕлтĕрех тултарнă, анчах темĕнле сăлтавсене пула Мускавран çакна çирĕплетекен документ халĕ те çитеймен-ха. Саша Вятка тăрăхĕнче çакна тепĕр хут çирĕплетсе пачĕ.

Алина Иванова та (70 кг) тренерсен шанăçне тӳрре кăларчĕ. Вăл Вологда облаçĕнчен килнĕ Л. Гротт атлеткăна çеç выляса ярса кĕмĕл медале тивĕçнĕ. Пучинкесем виççĕшĕ те Раççейĕн финалне кайма путевка çĕнсе илнĕ. Анчах Улан-Удэ хулине (финал та çавăнта иртет) çитме укçа-тенкĕ тупасси иккĕленӳллĕ.

Пĕтĕмлетӳ тунă хыççăн, Чăваш Ен команди 30 командăран иккĕмĕш вырăн йышăннă. Пучинке яшкĕрĕмĕ те çак çитĕнĕве туптама пысăк тӳпе хывнă.

**_Г. ВАСИЛЬЕВ._**

# АСĂРХĂР: КОНКУРС!

## ХАЛĂХ ĂСТАÇИСЕМ, ĂÇТА ЭСИР?..

**Республикăра Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2005 çулхи раштавăн 1-мĕшĕнче йышăннă постановленипе килĕшӳллĕн, халăх промыслисемпе ремеслисене 2006-2010 çулсенче аталантарас тата сыхласа усрас тĕлĕшпе ятарлă программа çирĕплетнĕ. Çав программăра палăртнă тĕп мероприятисене пурнăçласа, ЧР Экономика аталанăвĕн тата суту-илӳ министерстви кăçалхи акан 1-мĕшĕпе 30-мĕшĕ тата çу уйăхĕн 1-мĕшĕпе 31-мĕшĕ хушшинче сувенир продукцийĕ хатĕрлес тĕллевпе ятарлă конкурссем ирттерме йышăннă.**

Çав конкурссен положенине çирĕплетнĕ. Конкурссен тĕллевĕ – халăх промыслисене, ремеслисене тата сувенир продукцийĕсене анлăрах çул парасси, вĕсене аталантарма пулăшасси, ку енĕпе палăртнă ăстаçăсене тупса палăртасси, рынока паянхи вăхăтпа килĕшӳллĕн сувенирсемпе тивĕçтересси тата çав продукцие шалти тата тулашри рыноксене ытларах кăларма майсем туса парасси.

Конкурссене юридици сăпатĕнче тăман предпринимательсем те, уйрăм çынсем те, çав шутра шкул ачисем те, профтехучилищĕсенче вĕренекенсем те, вузсен студенчĕсем те, алĕç промыслисен ăстаçисем те хутшăнма пултараççĕ.

Конкурса хутшăнакансем 30 çултан аслă пулмалла мар. Пĕр çыннăн конкурса 5 япаларан ытла тăратмалла мар.

Пирĕн республикăра алĕç промыслисемпе ремеслисен анлă сарăлнă тĕсĕсем хушшинче çаксем тĕп вырăнта: чăваш наци тĕрри, илемлетсе тĕртнĕ пир-авăр, йывăçран касса ăсталанă япаласем, хăваран авса тунă япаласем, керамика, шăрçапа, вак укçапа илемлетнĕ изделисем, музыка хатĕрĕсем, хурăн хуппинчен тунă савăтсапа, наци символикин элеменчĕсене кĕртсе тунă сувенир продукцийĕ.

Курава тăратмалли япаласене çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Ленин проспекчĕ, 12Б, Республикăри бузнес-инкубатор.

Конкурс комиссине 8 çынран туса хунă, ăна ЧР экономика аталанăвĕпе суту-илӳ министрĕ И. Б. Моторин ертсе пырать.

# ПИРĔН ИНСПЕКЦИ СОТРУДНИКĔСЕН ТЕ УЯВ!

Кăçалхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнче Раççейре уголовнăй исполнительнăй инспекцисенче ĕçлекенсем пĕрремĕш хут хăйсен кунне палăртаççĕ. 1919 çулхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнче РСФСР Юстици халăх комиссариачĕн 38-мĕш номерлĕ циркулярĕпе юстицин кĕпернесенчи тата облаçсенчи пайĕсен çумĕнче ирĕксĕр ĕçлеттермелли бюросем туса хунă, вĕсем уголовнăй йĕркепе айăпланнă, анчах ирĕкрен хăтарман çынсемпе ĕçленĕ.

Хальхи вăхăтра Чăваш Енре 25 районта çавăн пек инспекцисем ĕçлеççĕ. Вĕсен тĕп тивĕçĕ вăл – ĕçлесе юсанакансене, обязательнăй йĕркепе ĕçлемелле тунисене, уйрăм должноçсене е ĕç-хĕле пурнăçлассинчен хăтарнисене, условнăй майпа айăпланисене, судпа айăпланă çие юлнă хĕрарăмсемпе нумай ачаллă хĕрарăмсене, çавăн пекех айăплассине урăх вăхăта куçарнă çынсене тĕрĕслесе тăрасси. Условнăй майпа айăпланă çул çитмен ачасене тĕрĕслесе тăрассине те çак инспекциех шанса панă. Малашлăхра вĕсенех федераци саккунĕпе вăл кĕрекен ытти ĕçсемпе те тимлемелле пулать, çавсенчен пĕри вăл – айăпа кĕнисен ирĕклĕхне пӳлессипе çыхăннă ĕç.

2007 çулхи пĕрремĕш кварталта пирĕн республикăра çакăн йышши инспекцисенче 5788 çын шутра тăнă. Обществăлла йĕркелĕхе çирĕплетес тата преступленисем тăвассине хирĕç кĕрешессине вăйлатас тĕллевпе инспекцисен сотрудникĕсем юлашки вăхăтра айăпа кĕнисемпе ĕçленĕ чухне хистевĕн çĕнĕ мерисемпе усă курма тытăнчĕç, вĕсен шутне – тивĕçсемпе чарусене палăртасси тата хушасси, сăнав вăхăтне тăсасси, йĕркене сĕмсĕррĕн пăснăшăн ĕçлесе юсанмалла е обязательнăй ĕçсем тумалла айăпланисене ирĕкрен хăтарасси тата условнăй майпа айăпланине пăрахăçлассине кĕреççĕ. Çапла, пĕрремĕш кварталта ĕçлесе юсанмалла тунă 92 çынна тата обязательнăй йĕркепе ĕçлемелле тунă 14 çынна ирĕкрен хăтарнă, малтан условнăй айăпланă 117 ĕçе пăрахăçланă. Пĕтĕмпе 223 çынна «кирпĕч шутлама» ăсатнă.

Кăçалхи пĕрремĕш кварталта пирĕн инспекци 115 çынна айăпланă. Паянхи кун инспекцире 96 çын шутра тăраççĕ. Вĕсем пурте уголовнăй майпа айăпланисем, анчах ирĕкрен хăтармалла мар тунисем. (Пĕлтĕрхи çак вăхăтрипе танлаштарсан, кăçал 23 çын ытларах). Мĕн çинчен калать-ха ку? Суд практики çирĕплетнĕ тăрăх, ирĕкрен хăтарассине хирĕçлекен айăплавсемпе усă курасси вăй илсех пырать. Çынна обществăран уйăрмасăр айăплани кăмăл-туйăма ырăрах витĕм кӳрет. Тĕрмере ларса тухнисем çакна уйрăмах лайăх туйса тăраççĕ. Апла пулсан, çак меслете анлăрах çул парса пымалла. Йăнăш утăм тунă çынна пурнăçра тĕрĕс çул-йĕр суйласа илме пулăшмаллах.

**_Г. ТИМОФЕЕВА,_**
**_Федераци службин пирĕн районти 5-мĕш номерлĕ УИН пуçлăхĕ._**






# ТĂВАН ЧĔЛХЕ ЭРНИ

Энтриелĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта Чăваш чĕлхин эрни иртрĕ. Çавна май вĕренекенсене кашни кунах интереслĕ мероприятисене явăçтартăмăр. Ачасем тăван чĕлхене юратни, чăваш çыравçисен кĕнекисене кăмăлласа вулани палăрчĕ. Тĕрлĕ конкурса хутшăнса, вĕсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. «И. Я. Яковлев – Чăваш Улăпĕ», «Тăван чĕлхе асамлăхĕ» темăсемпе ирттернĕ калаçусем хыççăн (вĕсем 5-6 классенче иртрĕç) ачасем вăйă-конкурса хутшăнчĕç. Мария Прокопьева (6 кл.) чи нумай балл пухрĕ. «Сывлăхран хакли нимĕн те çук» ятпа иртнĕ тупăшура вара Мария Константинова (5 кл.) çĕнтерчĕ.

Аслă классенче вĕренекенсем «Эпир чăвашсем çинчен мĕн пĕлетпĕр?» олимпиадăра вăй виçрĕç. Кăсăк ыйтусене хуравласа Ирина Максимова (9 кл.) çĕнтерчĕ. Э. Альдемасова – иккĕмĕш вырăнта.

Ачасем Чăваш халăх писателĕ Леонид Агаков вăрçă темипе çырнă хайлавсен сыпăкĕсенчен йĕркеленĕ инсценировкăна пысăк ăсталăхпа выляса пачĕç. 7-мĕш класа çӳрекен Таня Максимова салтак амăшĕн рольне ăста, ĕненмелле уçса пама пултарни пурне те килĕшрĕ.

Дирекци чăваш чĕлхипе литератури предмечĕпе вĕрентекен Т. А. Дмитриевана эрне хушшинчи ĕçсене тивĕçлĕ шайра туса ирттернĕшĕн тав турĕ.

**_Н. МАКСИМОВА,_**
**_шкул директорĕн çумĕ._**

# РЕДАКЦИЕ КИЛНĔ ÇЫРУ

## ÇӲП-ÇАП КУПИ ÇИНЧЕ ШĂНА-ПĂВАН ЯВĂНАТЬ

Йĕпреç поселокĕнче тасалăхпа тирпейлĕхшĕн сахал мар тăрăшаççĕ пулсассăн та, хальлĕхе куçа «тăрăнакан» çитменлĕх питĕ йышлă. Мĕн çинчен калать ку? Тăван тавралăха тирпей-илем кӳрекенсемпе юнашарах çак ĕç çине пӳрне витĕр пăхакансем те тĕл пулаççĕ. Тĕслĕх шыраса инçене кайма та кирлĕ мар. Акă «Колхоз пасарĕ» вырăнĕнче юмахри пекех капмар та хӳхĕм магазинсем ӳссе ларчĕç. Кун каçипех çынсене йышăнаççĕ, халăха кирлĕ таварсемпе тивĕçтерсех тăраççĕ. Çав вăхăтрах кунта ĕçлекенсем хăйсен çывăхĕнче тасалăхпа тирпейлĕх хуçалантăр тесе нимĕн чухлĕ те тимлемеççĕ. Магазинран кăшт кăна пăрăнсанах мĕн асăрхатăн? Тем çӳллĕш пулса кайнă çӳп-çап купи умĕпе кун каçипе мĕн чухлĕ çын утса çӳремест-ши? Икĕ çул ĕнтĕ çак вырăнти тасамарлăх купине кирлĕ çĕре турттарса тухма те вăхăт, те машина тупаймаççĕ сутăçсем. Вĕсем: «Ку çӳп-çапа эпир тухса тăкман»,– теме те пултарĕç. Кирек кам хыççăн юлнă тасамарлăх пулсассăн та, ăна халиччenех çакăнта тытни, тем тесессĕн те, магазинсен хуçисене чыс кӳместех.

Пасар территорийĕнчи магазинсенче çамрăксем ĕçлеççĕ. Нивушлĕ вĕсем чĕрĕ илеме нимĕн чухлĕ те юратмаççĕ-ши? Йĕри-тавра чечексем лартса ӳстерме тытăнсан кунти картиш çуталса-çиççе кăна тăмалла.

Çу кунĕсенче çӳп-çап купи çинче шăна-пăван явăннине курма пулать. Санитари йĕркисене пăхăнман çĕрте тĕрлĕпĕр чир-чĕр сарăлас хăрушлăх та пысăк. Ман шутпа, сутăçсен тавар çаврăнăш планне тултарассишĕн кăна пуç ватмалла мар. Çут çанталăк, тăван тавралăх таса та илемлĕ пуласси пирĕнтенех килет.

**_М. ПОПОВА,_**
**_сывлăх сыхлавĕн ветеранĕ._**



/Вĕçĕ. Пуçл.1-мĕш стр./.

Шел, ытла та ир татăлнă пултаруллă спринтерăн тата стайерăн пурнăçĕ. Вăл 1944 çулхи пуш уйăхĕн 3-мĕшĕнче фашистсене хирĕç пынă тан мар тытăçусенчен пĕринче пуç хунă. Ăна Эстонири Кохтла-Ярве районĕнчи Синимая поселокĕнчи тăванла масарта пытарнă.

Пирĕн районта ирттерекен турнирсенчен чи «ватти» çак турнир: вăл çăмăл атлетикăна юратакансене пĕрремĕш хут 1967 çулта пуçтарнă. Апла-тăк, кăçалхи юбилейлă, хĕрĕхмĕш. 2007 çулхи чупу, çак «статуса» илнĕскер, чăн-чăн спорт уявне çаврăнчĕ: унта хутшăннă çынсем хăйсен çĕнтереслĕхĕпе хĕртĕнсе, Йĕпреç тăрăхĕн мухтавлă ывăлне мĕн таран хисепленине яруççăн кăтартса пачĕç.

Иртнĕ шăматкун çанталăк меллĕ пулмарĕ. Кунĕпе тенĕ пекех тӳпере тăхлан пек йывăр пĕлĕтсем ишсе çӳрерĕç, çурçĕртен сивĕ, вичкĕн çил вĕрсе тăчĕ. Чупу вĕçленессине сиснĕнех, ăмăрту ялавне антараспа Йĕпреç поселокĕн

# ХĔРĔХМĔШ, ЮБИЛЕЙЛĂ...

стадионĕ çийĕн аслатиллĕ çумăр иртрĕ.

Эпир вара каллех стадион патне таврăнăпăр. Вăл тӳрремĕнех Тимофей Петров ячĕпе çыхăннă. Шăпах 71 çул каялла унăн пуçарăвĕпе тата вăл ертсе пынипе уçăлнă та ĕнтĕ çак стадион.

... «Спартак» стадион тĕрлĕ тĕссемпе çиççе тăрать. «Ăмăртăва хутшăнакансене – салам» тесе çырнă хăмача çил чӳхентерет. Раççей Федерацийĕпе Чăваш Республикин Патшалăх ялавĕсене те çил вылянтарать. Палăртнă вăхăтра стадион хĕррипе чупăва килнисем йĕркеленсе тăчĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ А. И. Петров вĕсене ăшшăн саламларĕ, ырлăх-сывлăхпа ăнăçу сунчĕ. «Пирĕн пата хамăрăн мухтавлă ентешĕмĕр, Бостонри марафон чупăвĕн çĕнтерӳçи Лидия Григорьева килнĕ», – терĕ те Анатолий Иванович, унăн сăмахĕсене хыттăн алă çупни хупласа хучĕ. Чапа тухнă спортсменка халалĕ питĕ кĕске пулчĕ: «Тăван районăн чысĕпе мухтавне çӳлте тытма тăрăшăр, хаклă тусăмăрсем!»

Лидия Григорьеван килĕнче тĕрлĕ ăмăртура çĕнсе илнĕ медаль нумай. Вĕсен çумне тата тепĕр медаль хутшăнчĕ çав кун: Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар çыннисене пĕрлештерекен «Йĕпреçсен ентешлĕхĕ» правлени ăна çак пĕрлешĕве йĕркеленĕренпе 10 çул çитнĕ ятпа кăларнă медальпе наградăланă иккен. Асăннă пĕрлешӳ правленийĕн пуçлăхĕ В. В. Федоров ăна тата унăн мăшăрне, Валерий Григорьев тренера çав медальсене çакса ячĕ.

Тимофей Петровăн ывăлне, Раççей Федерацийĕн чукун çулĕн тава тивĕçлĕ ĕçченне, Вăрнар поселокĕнче пурăнакан Георгий Тимофеевич Петрова сăмах пачĕç. «Эсир кирек хăçан та Тимофей Петровпа танлашма тăрăшăр, – пил панăн янрарĕç унăн сăмахĕсем. – Аттен çутă сăнарĕ сире спортра пысăк çитĕнӳсем тума хавхалантартăр».

Йĕпреçри тĕп стадионтан çăмăл атлетсене лартнă автобуссем Тимофей Петров çуралнă яла çул тытрĕç. Хыркасси – старт вырăнĕ. Старт пуçланни çинчен пĕлтерекенĕ Лидия Григорьева пулчĕ. Ватти-вĕтти малалла талпăнчĕç. Ăмăртăва килнисен хушшинче шкул ачисем ытларах. Чи çамрăкки – Хурамалти вăтам шкулăн 4-мĕш класĕнче вĕренекен Рая Ильина. Чи ватти вара – Хурамал ялĕнчи ĕç ветеранĕ 64 çулхи Рудольф Патин. Вăл пĕр çул кăна мар хутшăнать çак чупăва. Спортсменсем ушкăнпа тапранса тухнăччĕ, анчах кăшт вăхăтранах вĕсем темиçе пая уйрăлса кайрĕç. Чи маттуррисем, чи хастаррисем малтан та малалла талпăнчĕç, вăйсăртараххисене кая тăратса хăварчĕç.

Ку дистанцире çĕнĕ рекорд çураласса кĕтнĕччĕ эпĕ. Шанни тӳрре тухаймарĕ. Вăтăр çул каялла Николай Миронов кăтартнă вăхăта ку хутĕнче те никам та çĕнетеймерĕ. Юбилей чупăвĕн абсолютлă чемпионĕ кам пулчĕ тетĕри? Вăл – Пучинке каччи, Чăваш ял хуçалăх академийĕн инженери факультечĕн 4-мĕш курсĕн студенчĕ Михаил Максимов. Çичĕ çухрăма чупса тухма ăна 23 минут кирлĕ пулчĕ. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенче вĕренекенсенчен Михаил Максимовран 1 минут каярах Алексей Исаков (Эйпеç) чупса çитрĕ.

Кашни ушкăнрах хăйсен çĕнтерӳçисем, призерĕсем палăрчĕç. Акă Кушлавăш лесничествин лесничийĕ Герман Ерилеев хăйĕн кăçалхи ӳсĕмĕпе питех те кăмăллă. 40-50 çулсенчи ăмăртуçăсен хушшинче унăн кăтартăвĕ чи лайăххи – 28 минут. «Пĕлтĕр 29 минутра чупса тухнăччĕ, – терĕ Герман Владимирович. – Ватăлма иртерех-ха...»

Ленинкасси поселокĕнчи Станислав Федоров та, Хурамалти ĕç ветеранĕ Рудольф Патин та, Туçари Николай Андреев тренер та тата ытти хăш-пĕр спортсменсем те «пĕчĕк марафона» ăнăçлă вĕçлеме тӳр килнĕшĕн çав тери савăннă.

Туçари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулăн 8-мĕш класĕнче вĕренекен Кристина Михайлова вара хĕрачасен хушшинче абсолютлă чемпионка пулса тăчĕ. Вăл Лидия Григорьева аллинчен сумлă парне илме тивĕçрĕ. Эйпеçри вăтам шкулта вĕренекен Алексей Исаков та паллă ентешĕн аллинчен илнĕ парнепе тивĕçлипех курнăçланĕ.

Вăтам шкулсен хушшинче кĕлĕмкассисем пĕрремĕш, хурамалсем – иккĕмĕш, çăкалăхсем – виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенчен туçасем пĕрремĕш, çĕнĕвыçлисем иккĕмĕш, шăрттансем виççĕмĕш вырăнсене пайларĕç.

Кĕлĕмкасси ял тăрăхĕн администрацийĕ вăйлă команда тăратнă, вăл ял тăрăхĕсен тупăшăвĕнче малти вырăна çĕнсе илме пулăшрĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче – Чăваш Тимешпе Ирçе Çармăс ял тăрăхĕсем.

Çĕнтерӳçĕсемпе призерсене район пуçлăхĕ А. И. Петров, Тимофей Петровăн ывăлĕ Г. Т. Петров, Шăрттан ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. К. Ефремова наградăсем пачĕç.

Юбилейлă, хĕрĕхмĕш ăмăрту хыçра ĕнтĕ. Малта вара – çĕнĕ стартсем, çĕнĕ çитĕнӳсем...

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***
***Д. ДИМИТРИЕВ /фото/.***



**ЎКЕРЧĔКСЕНЧЕ:**

***ÇӲЛТЕ: Бостонри марафон çĕнтерӳçи Лидия Григорьева тата унăн мăшăрĕ Валерий Григорьев тренер.***

***АЯЛТА: юбилейлă чупура хăйсен ушкăнĕсенче, лайăх вăхăт кăтартса, мала тухнă спортсменсем /сулахайран сылтăмалла/ Р. Патин, Г. Ерилеев, Н. Андреев тата С. Федоров. Вĕсем çак чупăва кашни çулах хутшăнаççĕ.***

## ИСТОРИ СТРАНИЦИСЕМ ТĂРĂХ

# ХУМРИИШЕКСЕМ ГРАЖДАН ВĂРÇИНЧЕ

**Раççейре февральте тата октябрьте пулса иртнĕ икĕ революци хыççăн, пĕр-пĕрне хирĕçлекенсем – кивĕ тытăма хӳтĕлекенсем тата çĕнĕ йĕркене пуçаракансем хушшинче кĕрешӳ пуçланса кайнă. Çакă çĕршыва граждан вăрçи патне илсе çитернĕ. Çав пăтăрмахсемпе усă курса, кивĕ тытăма сыхласа хăварас тесе, 1918 çулхи çуркунне Раççей çине Франци, Япони, Англи, Америка çарĕсем килсе кĕнĕ. Çавăн чухне çамрăк Совет влаçне хӳтĕлесе хăварас ыйту питĕ çивĕччĕн тухса тăнă. Йывăр лару-тăрура Пĕтĕм Раççейри Тĕп комитет ĕççыннисене Чĕнсе каланă, çакăн хыççăн хуласемпе ялсенче пурăнакансем çĕршыва хӳтĕлеме кар çĕкленнĕ. Алла хĕç-пăшал тытса пуласлăхшăн, çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешĕве тухнисен хушшинче Хумри Ишек çыннисем те пулнă. Хаçат вулаканĕсене вĕсем çинчен каласа парас шухăшпа алла ручка тытрăм.**

Григорий Григорьев (1900-1983 ç.ç.) 1919-мĕш çулхи юпа уйăхĕнче Юденич генерал çарĕнче Петроград хулине илессишĕн пынă хаяр çапăçусене хутшăннă. Вăл çавăн пекех Архангельск, Мурманск хулисене шурă гвардеецсенчен ирĕке кăларнă çĕрте те пулнă. 1921 çулта Кронштадра çĕкленĕ пăлхава пусарма та тӳр килнĕ ăна. Пирĕн ентеш Ф. Э. Дзержинскин хĕрӳ сăмахĕсене пĕрре кăна мар итленĕ. Вăл тĕрĕс-тĕкелех таврăннă яла. Мирлĕ ĕçе кӳлĕнсен, ял Канашĕн секретарĕ, унтан ертӳçи пулса ĕçленĕ. Колхоз йĕркеленсен, малтанах счетоводра ĕçленĕ, кайран хуçалăха ертсе пынă. 1941 çулта, нимĕç фашисчĕсем пирĕн çине тапăнса кĕрсен, иккĕмĕш хут вăрçа кайнă. Аслă Çĕнтерӳччен тĕрлĕ фронтсенче çапăçнă.

Климентий Романов вара Буденный ертсе пынă утлă çар корпусĕнче çапăçнă. 1919 çулта Кăнтăр фронтри лару-тăру йывăрлансах çитнĕ. Дон тăрăхне, Орел, Воронеж, Курск хулисене Совет Республикин тăшманĕсенчен ирĕке кăларнă. Пĕр çапăçура аманнă. Хумри Ишеке таврăнсан, ялта йĕркеленнĕ колхозра лашасем пăхнă. Вăрçăн малтанхи çулĕсенче фронта сахал мар лаша ăсатнă пирĕн ентеш. Иван Максимович Ендерева та Буденнăйăн утлă çарĕнче çапăçма тивнĕ. Пурăннă чухне вăл пире çавăн пирки тăтăшах каласа паратчĕ. Пĕррехинче Иван Ендерев штабри çыхăнăва йĕркелесе ларнă. Сасартăк лини çинче, кабель татăлнипе, самантлăха çыхăну сухалнă. С. М. Буденный ăна çавăнтах çирĕп хушу парать те, Иван Ендерев пралук йĕрĕпе татăлнă вырăна шырама каять. Шуррисем татти-сыпписĕр персе тăнине пăхмасăр чăваш каччи командарм хушăвне чыслăн пурнăçлать. Икĕ çухрăм пек хырăмпа шунă хыççăн вăл татăлнă вырăна асăрхать, ăна сыпса хурать. «Маттур», – ырлать салтака С. М. Буденный. Иван Максимов колхоз утарĕнче хурт-хăмăр пăхнă çĕрте чылай çул ĕçлерĕ. Ăста платник-столярччĕ вăл.

Илья Тимофеев Вăтам Азире басмачсемпе 1922 çултан пуçласа 1933 çулчченех çапăçнă. Рота комиссарĕн тивĕçне пурнăçланă вăл, яла канма килсен те, алă усса ларман комиссар, Калюков бандине тĕп тунă çĕре хутшăннă. Анчах та Чăваш Енре лашасем вăрласа «чапа» тухнă вăрă-хурахпа унăн ушкăнне пуçĕпех пĕтеричченИлья Тимофеева хăйĕн ĕç вырăнне васкавлăн чĕнсе илнĕ. Вăл ĕмĕр тăршшĕпех Ашхабад хулинче пурăнчĕ. Ăна çав хуларах пытарнă.

Павел Волков – В. И. Чапаевăн 25-мĕш стрелковăй дивизийĕнче çапăçнă пулеметчик. Павел Прокопьева вара 1919 çулта Çĕпĕрте Колчак çарĕсене хирĕç çапăçма тивнĕ. Челябинск, Омск хулисене интервентсенчен тасатассишĕн хĕрӳ çапăçнă. Яла таврăннă тĕле пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем йĕркеленме тытăннă, Павел Прокопьев выльăх ферминче ĕçленĕ. «Колхозра ун пек тырă нумай ĕçлесе илекен тек пулман, – аса илетчĕç ватăсем. – Ӳркенмен, бригадир хушнă пĕр ĕçрен те юлман». Хумри Ишекрен граждан вăрçине хутшăннă çынсенчен К. Леонтьевпа Т. Александрова тата К. Григорьева асăнса хăвармалла. Пурте тĕрĕс-тĕкел таврăнайман çав каялла. Çирĕм пилĕк çын вăрçă хирĕнче выртса юлнă. Сывă таврăннисенчен хăшĕ-пĕрисем вырăнта Совет влаçне хӳтĕлесе пуçĕсене хунă. Акă, граждан вăрçинчен аманмасăрах килнĕ Иван Паньков. Хурамалта çĕкленнĕ «чаппан пăлхавĕнче» хăйĕн вилĕмне тупнă. Мĕн туса айăпа кĕнĕ пулнă-ши çак çын? Ăна хĕрлисем халăх умĕнчех персе вĕлернĕ.

...Истори «урапи» пĕр вырăнта тăмасть, вăл пĕр вĕçĕмсĕрех çаврăнать те çаврăнать. Камсем тĕрĕс тунă, камсем йăнăшнă? Паянхи вăхăт тӳпинчен пăхса хаклакан историксем те тĕрлĕрен калаççĕ. Пĕтĕмлетӳ тума йывăр. Анчах та, çĕршыв чĕнсен, пирĕн ял çыннисем те алла хĕç-пăшал тытса, Тăван çĕршывшăн хăйсен пурнăçĕсене шеллемесĕр çапăçнă. Вĕсем аслисен хушăвĕсене пурнăçланă, çĕре юнпа пĕветнĕ. Пирĕн, паянхи ăру çыннисен, вĕсем тунă ĕçе тĕрĕс хак пама пĕлмелле.

***Василий ЧЕРНОВ.***

## ФЕСТИВАЛЬ

# КĂТАРТУСЕНЕ ПĔТĔМЛЕТНĔ

**Кăçалхи халăх пултарулăхĕн районти фестивалĕ ытти çултисенчен уйрăлса тăчĕ. Унăн пĕрремĕш тапхăрĕ вырăнсенче, ял тăрăхĕсенче иртрĕ. Пĕтĕмпе ял тăрăхĕсен 17 ушкăнĕ смотр-конкурса хутшăнчĕ. Çав шутран 2 ушкăнĕ вĕрентекенсен коллективĕсем, 3 ушкăнĕ – район администрацийĕн, Йĕпреç хула тăрăхĕн администрацийĕн тата районти 28-мĕш номерлĕ пушар хуралĕн коллективĕсем – асăннă фестивале пуçласа хутшăнчĕç. Ял тăрăхĕсенчен фестивале хăйсем тĕллĕн вĕреннĕ артистсем 593 çын хутшăнчĕç. Активлăх самаях ӳснĕ.**

Фестивалĕн чи хĕрӳ те чи интереслĕ концерчĕсем пулса иртрĕç ĕнтĕ, вĕсене пырса курнă çынсем талантсен пултарулăхĕпе питех те кăмăллă юлчĕç. Ял тăрăхĕсен хушшинчи смотрта Кĕлĕмкасси тăрăхĕн пултарулăх ушкăнĕ 90 балл пухса 1-мĕш вырăна çĕнсе илчĕ, Ирçе Çармăс ял тăрăхĕн ушкăнĕ 2-мĕш, Буинск ял тăрăхĕн коллективĕ 3-мĕш вырăнсене йышăнчĕç. Туçасем те питĕ лайăх номерсемпе савăнтарчĕç куракансене, вĕсене фестивале активлă хутшăннăшăн хавхалантармалли приз пама йышăннă.

Ĕç коллективĕсен хушшинчи смотрта район администрацийĕн, Йĕпреç хула тăрăхĕн тата районти 28-мĕш номерлĕ пушар хуралĕн пултарулăх ушкăнĕсем пĕрпĕринпе тупăшрĕç. 1-мĕш вырăна Йĕпреç хула тăрăхĕн пултарулăх ушкăнĕ (музыка ертӳçи Валентин Кузнецов) тивĕç пулчĕ, 2-мĕш вырăнта – район администрацийĕн пултарулăх коллективĕ. Смотрфестивале ку коллектива та В. Кузнецов хатĕрленĕ. Курма килнисем Буинскри культура çурчĕ çумĕнчи пултарулăх ушкăнĕн артисчĕсене те хапăлласа йышăнчĕç, Геннадий Семенов музыка руководителĕ ертсе пынипе вĕсем чаплă номерсене сцена çине кăларчĕç.

Кăçалхи фестивале шкул ачисен 13 пултарулăх ушкăнĕ хутшăнчĕ, пĕтĕмпе 739 вĕренекен сцена çине тухрĕ. Шел пулин те, фестивале Березовкăри, Липовкăри вăтам шкулсем, Пăкăянти, Çĕнĕ Выçлири тата Энтриелĕнчи тĕп шкулсем хутшăнмарĕç.

Чи нумай балл пухса Йĕпреçри 1-мĕш номерлĕ вăтам шкул ушкăнĕ çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ, вĕсем хыççăнах Йĕпреçри 2-мĕш номерлĕ шкул пулчĕ, виççĕмĕш вырăнта – Ирçе Çармăс шкулĕ.

Тĕп шкулсенчен Йĕпреçри шкул-интернатăн çамрăк артисчĕсем мала тухрĕç, иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче – туçасемпе шăрттансем.

Эйпеçри тата Пучинкери вăтам шкулсенчи вĕрентекенсен пултарулăх ушкăнĕсен активлăхне палăртса хăварма уйрăмах кăмăллă.

Кăçал фестивале пĕтĕмпе 31 ушкăн, 1332 çын хутшăнчĕ.

Драма коллективĕсен хушшинче иртнĕ фестивальте 22 пултарулăх ушкăнĕ хăйсен ĕçĕсене кăтартрĕç. Вĕсемпе харпăр-хăй тĕллĕн вĕреннĕ 22 режиссер ĕçленĕ, вĕсенчен 14-шĕ хăйсем те спектакльсенче вылярĕç. Чи вăйлă драма коллективĕ шутне Березовкăри культура çурчĕн ушкăнне кĕртмелле. Кунти артистсем смотр-фестиваль çĕнтерӳçисем пулса тăчĕç. Кĕлĕмкасси артисчĕсем – иккĕмĕш вырăнта, виççĕмĕш вырăна пăкăянсемпе пĕчĕкупакассисем пайларĕç.

Фестивалĕн йĕркелӳ комитечĕ (ертӳçи В. Л. Михалик, район администрацийĕн социаллă аталану пайĕн начальникĕ), район пуçлăхĕпе тата вырăнти ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе пĕрле канашласа килĕшнĕ хыççăн, пĕр пĕтĕмлетӳ патне çитсе тухрĕ: мала тухнă ушкăнсем «Ача-пăча уявĕнче» тата «Акатуйра» сцена çине хăйĕн чи лайăх номерĕсене кăларнă хыççăн кăна призлă пулса тăраççĕ. Çак уявсене валли суйласа илнĕ номерсем çинчен Йĕпреç хула тăрăхĕн культура çуртĕнче методика кабинетĕнче ыйтса пĕлме пулать.

***Н. КОНДРАТЬЕВА, жюри председателĕн çумĕ.***

## ШКУЛ ХЫПАРĔСЕМ

# МАТТУР, НАСТЯ!

Настя Чернова 9-мĕш класра вĕренет. Кĕнеке нумай вулать. Вĕренӳре «4», «5» паллăсемпе çеç ĕлкĕрсе пырать. Вăл чăваш чĕлхипе физкультура предмечĕсене уйрăмах кăмăллать. Шкулти пĕр мероприяти те унсăр иртмест темелле. Шашка-шахматла выляса та районти ăмăртусенче пĕр хутчен çеç мар малти вырăнсене йышăнчĕ.

Нумаях пулмасть Чăваш наци музейĕпе библиотеки Чăваш чĕлхин кунĕ умĕн ятарлă конкурс йĕркелерĕç. Пĕрремĕш турта 5 ыйтуран тăракан ĕçе тĕрĕс пурнăçласа, Настя финала тухрĕ. Ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче конкурсăн иккĕмĕш турĕ иртрĕ. Чăваш наци музейне çав кун çамрăк ăсчахсем пуçтарăнчĕç. Çĕнĕ Выçли хĕрачи Шупашкартан дипломпа таврăнчĕ.

***Юлия ШУРКИНА,***
***Çĕнĕ Выçлири пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулăн 6-мĕш класĕнче вĕренекен.***

# ЧĂВАШ ТУМĔН УЯВĔНЧЕ

**Çак кунсенче Пучинкерен савăнăçлă хыпар илтĕмĕр. Ку ялти вăтам шкул коллективĕ Чăваш Республикин патшалăх символĕсен кунне халалласа ирттернĕ чаплă уява хутшăнма тивĕç пулнă иккен. Унта кайса килнĕ хыççăн хавхаланулла кăмăл-туйăмпа шкул вĕрентекенĕ С. А. Иванова телефонпа çапла пĕлтерчĕ:**

– Чăваш Республикин вĕрентӳпе çамрăксен политикин, Чăваш Республикин культурин, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствисем тата Чăваш Наци Конгресĕ пуçарнипе ака уйăхĕн 28-мĕшĕнче Шупашкарта пĕрремĕш хут чăваш наци тумĕн чаплă уявне ирттерчĕç. Пире К. В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх драма театрĕ хапăл туса кĕтсе илчĕ. Театр чăваш чун-чĕриллĕ, унăн пуласлăхĕшĕн хыпса çунакан çынсемпе тулсах ларнă. Эпир те çак йыша хутшăнма пултарнăшăн чун-чĕререн хĕпĕртерĕмĕр. Чаплă уява эпир чăваш халăхĕн мĕн авалтан пыракан тумĕсемпе хутшăнтăмăр. Эпир хамăр тăрăхри чăвашсене палăртса тăракан çи-пуçа аслă ăрури чăвашсенчен вĕренсе пырса, чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Л. Н. Клементьева, Е. М. Михайлова учительсем ытларах тăрăшнипе, ертсе пынипе хамăр алăсемпе ăсталатпăр. Шкулти учительсен творчество ушкăнĕ илемлĕ чăваш тумĕсемпе театрăн пысăк сцени çине тухрĕ, тумсене кăтартнă май, хăй тĕллĕн вĕреннĕ композиторăн, хамăр ĕçтешĕмĕрĕн Л. М. Ивановăн тăван ене халалласа хывнă юррине мăнаçлăн шăрантарса патăмăр. Юрă çеммипе тухья тăхăннă чăваш кĕпиллĕ хĕрсем чăвашсен акăш евĕр ташшипе халăх умне тухрĕç. Пирĕн номере пысăк хак пачĕ курма пынă халăх, залра чылайччен ала çупни илтĕнсе тăчĕ. Уява йĕркелекенсенчен тав хучĕсем те илтĕмĕр.

Театрăн аслă фойинче алĕç ăстисен япалисене курава тăратнă. Унта пучинкесем те хăйсен чи илемлĕ япалисене тăратрĕç. Шкулти алĕç кружокне ертсе пыракан З. Акчурина йĕркелесе пынипе ачасем ăсталанă тухъясемпе хушпусене, тĕрĕсемпе, чăвашлăха палăртакан символикăсемпе илемлетнĕ япаласене, сăмса тутрисемпе салфеткăсене, алшăллисене кунта илсе килнĕ. Ялти алĕç ăстисем Людмила Романовапа Светлана Васильева та хăйсен ĕçĕсене тăратнă кунта. Курма килнисем вĕсене тухъя, хушпу тума заказсем парса тултарчĕç.

Чăвашлăх уявĕнче паллă артистсемпе юрăçсем сцена çине тухрĕç. Иван тата Вячеслав Христофоровсем, пĕртăван Малинасем илемлĕ юрă-кĕвĕ парнелерĕç. Çавăн пекех чăваш тумĕсен чапне тĕнче шайĕ таранах çĕкленĕ ăстаçăсен ĕçĕсене, тĕслĕхрен, Е. Жачевăн çĕнĕ коллекцийĕсене курса тĕлĕнтĕмĕр. Тĕртнĕ пиртен çĕлесе капăрлатнă çи-пуçсене тăхăннă çамрăк пикесем сцена çине тухаççĕ те пĕтĕм тавралăх çĕнĕ илемпе – чăвашлăхпа тулать, чун-чĕрере мăнаçлăх туйăмĕ вăранать. Эпир – чăвашсем, пирĕн хамăрăн тумсемпе, ĕлĕкрен пыракан ырă йăла-йĕркесемпе мухтанмалăх пур çав.

***С. ВАЛЕНТИНОВА.***

# МАСАР ÇИНЧЕ – ТАСАТУ КУНĔСЕМ

Савккапа Çĕнĕ Кĕлĕмкасси ялĕсен масарĕ пĕр çĕрте, Савкка çумĕнчи пысăках мар лапамра вырнаçнă. Вилнисем хăйсен ĕмĕрхи канăçне тупнă вырăн таса та тирпейлĕ пултăр тесе, икĕ ял çыннисем сахал мар тимлеççĕ. Акă, нумай пулмасть вĕсем масар çинче умлăн-хыçлăн виçĕ кун экологи субботникĕ ирттерчĕç. Ольга Белова, Нина Наумова, Виталий Михайлов, Александр Федоров пенсионерсем çак ĕçре уйрăмах пуçарулла пулчĕç.

Ушкăнпа хунаса кайнă йывăç-тĕмсене касса тасатрăмăр, пĕлтĕрхи курăка пуçтарса çунтартăмăр. Путнă вил тăприсене майласси те тĕпре пулчĕ.

Масарсем çинче йĕрке тăвассине Çимĕк çитеспе кăна аса илмелле мар. Сăваплă вырăна таса та типтерлĕ тытасси вăл – çулталăк тăршшĕпех тумалли ĕç.

Кăçалхи Питравра Савкка ялне никĕсленĕренпе 85 çул çитет. Ялти пенсионерсем тата Пучинке ял Пухăвĕн депутачĕсем пуçарнипе яла юбилей тĕлне тирпейлесе çитерессипе çыхăннă ыйтăва та кун йĕркинчех тытатпăр. Урама çӳп-çапран тасататпăр, йывăç-тĕмсем лартатпăр.

Хальлĕхе тавралăх шыв-шуртан типсе çитеймен-ха. Çывăх вăхăтрах ялйышпа Савккапа Çĕнĕ Кĕлĕмкассинче кăтартулла йĕрке тума пуçăнăпăр.

***С. НАУМОВ,***
***Пучинке ял тăрăхĕн депутачĕ.***

# САМАХКАÇМĂШ




**СУЛАХАЙРАН СЫЛТĂМАЛЛА:** 1. Эрехрен йӳнĕрех те, йăвашрах та. 3. Страхлакан органăн тĕп ĕçĕ. 8. Иртнĕ ĕмĕрĕн 30-50 çулĕсенче вăл пирĕн асаттесемпе асаннесен тинкисене кăларнă. 13. Илемлĕ чечек. 14. Пӳртĕн шанчăклă пайĕ. 15. Вăл – «иккĕмĕш çăкăр». 19. Пыл хурчĕсене мĕн илĕртет? 20. Красноармейски районĕнчи пысăк ял, унта чăвашсен паллă фольклорçи Иван Патмар çуралса ӳснĕ. 21. Стратегие лайăх пĕлекен çын. 22. Ӳссе çитсен Роман, ача чухне – ... 24. Кĕске ăслă çын. 25. Укçа тесен, ... урине тăснă, теççĕ. 29. Факультетăн тĕп хуçи. 30. Вырăсла – Ирина, чăвашла – ... 31. Чечек те, хĕр ача ячĕ те. 32. Пĕр вăхăтра таварсене ...па паратчĕç. 33. Раççейĕн паллă киноартисчĕ. 34, 35. Хаклă йышши чул. 36. Музыка хайлавĕнчи мĕнпур партисем. 40. Çухрăм ... ран пуçланать. 45. «Нарспи» поэмăри сăнар. 47. Çак йывăç кăнтăрта ӳсет. 48. Мĕскĕн, выçă выльăх. 49. Раççейĕн тухăçри облаç центрĕ. 53. Борис Ельцинăн арăмĕн ячĕ. 54. Сăра ĕçмелли пысăк савăт. 55. Ямăттине куçлакан çын. 56. Больницăри кĕçĕн персонал. 57. А. Чеховăн «Чие сачĕ» пьесинчи сăнар.

**ÇӲЛТЕН АЯЛАЛЛА:** 1. Чăваш халăх поэчĕ. 2. Авалхи вăхăтран юлнă япала. 4. Самолет çинчен анмалли пусма. 5. Инçет Хĕвелтухăçĕнчи юханшыв. 6. Çăлтăрсен ушкăнĕ. 7. Тракторист пĕрремĕш ... тухрĕ. 9. Атте амăшĕ. 10. Атомăн чи пĕчĕк пайĕ. 11. Çăл та, виçмелли хатĕр те. 12. Чаплă, хӳхĕм çурт. 16. Хайлав çыракан çын. 17. Хура тинĕс хĕрринчи курорт. 18. Хăш-пĕр çĕршывсенчи кантурта ĕçлекен. 23. Океансене тĕпчекен. 26. Сăмах чĕнмесĕр лартакан спектакль. 27. Картиш, пахча. 28. Тепĕр майлă – шуйхату. 33. Чăваш композиторĕ, хăй вăхăтĕнче вăл пирĕн районти Çăкалăхра вĕреннĕ. 37. Сарпи сăвăç ячĕ. 38. Цирк сцени. 39. Хура тинĕс хĕрринчи, Колхида айлăмĕнчи пысăк мар хула. 41. Пирĕнпе кӳршĕллĕ Канаш районĕн пуçлăхĕ. 42. Ватă арçын. 43. Музыка хайлавĕ. 44. Канаш районĕнчи ял. 46. Шăратса çыпăçтармалли меслет. 49. Платникĕн тĕп ĕç хатĕрĕ. 50. Чăваш сăвăçи, вăл Гордеев хушаматпа çӳренĕ. 51. Арçын ячĕ. 52. Афганистанри хула.

## ХАÇАТĂН 32-МĔШ НОМЕРĔНЧИ САМАХКАÇМĂШ ХУРАВĔСЕМ

**СУЛАХАЙРАН СЫЛТĂМАЛЛА:** 1. Турă. 3. Скульптор. 8. Эфир. 13. Мопед. 14. Пакун. 15. Антанта. 19. Тенкел. 20. Фараон. 21. Украина. 22. Лавр. 24. Хастарлăх. 25. Урок. 29. Атлет. 30. Олифа. 31. Ясмăк. 32. Танго. 33. Парăм. 34. Орган. 35. Лира. 36. Çĕмĕртлĕх. 40. Офис. 45. Сталина. 47. «Челкаш». 48. Палата. 49. Капитан. 53. Пукра. 54. Апина. 55. Агри. 56. Чулкăмака. 57. Дани.

**ÇӲЛТЕН АЯЛАЛЛА:** 1. Тăваткал. 2. Румыни. 4. Кеда. 5. Лист. 6. План. 7. Оспа. 9. Фонтан. 10. Романтик. 11. Аптека. 12. Октава. 16. «Никĕс». 17. Агава. 18. Тенел. 23. Аттестаци. 26. Орфографи. 27. Атакама. 28. Портнов. 35. Ланчашка. 37. Матка. 38. Ралли. 39. Лента. 41. Санатори. 42. Уланкă. 43. Графин. 44. Илепер. 46. Тамаша. 49. Кану. 50. Парк. 51. Тайм. 52. Наяк.


## КАНАШСКОЕ ПРЕДСТАВИТЕЛЬСТВО ОАО «ЧУВАШАГРОКОМПЛЕКТ»

**предлагает:**
**– мотоблоки и навесное оборудование к ним;**
**– сеялки, косилки, грабли-ворошилки, пресс-подборщики;**
**– плуги, культиваторы, окучники, бороны, дискаторы, картофелесажалки, опрыскиватели, зернодробилки;**
**– ремни, рукава разных размеров;**
**– шины на все виды с/х машин;**
**– подшипники, сальники;**
**– аппараты индивидуального доения, охладители молока, маслобойки, кормомиксеры;**
**– задвижки, отводы, фланцы, вентили, компрессоры, насосы, клапана, калориферы, светильники, лампы, сварочное оборудование, электродвигатели, краны различных размеров, электроды.**

**Работники отдела принимают заявки на поставку любого оборудования и запасных частей.**
**Заказы выполняются в течение 2-х дней.**
**Адрес представительства: г. Канаш, ул. Кооперативная, д. 14 (рядом с ПАТП). Телефон: 89022491502.**


## ВУЛАКАНСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

**«Çĕнтерӳшĕн» хаçатăн çитес номерĕ ытларикун, çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче тухать.**

## САЛАМЛАТПĂР

Çывăхран та çывăх çыннăмăра, çуратса ӳстернĕ, ăс-тăн парса, телей пиллесе пурнăç çулĕ çине кăларнă аннемĕре, ял çинче ырă ятлă, хисеплĕ хунямана, ылтăн-кĕмĕлрен те хаклă асаннекукамая – Красная Заря поселокĕнче пурăнакан **Франциска Григорьевна ИЛЬИНАНА** – пĕтĕм чунчĕререн юратса çуралнă кунĕпе, 70 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Вăрăм ĕмĕр, çутă ăраскаллă кун-çул, тивлетлĕ те çителĕклĕ пурнăç, çирĕп сывлăх сунатпăр.

Анне, хуняма, кукамай-асанне,
Эс салхуллă ан пул ĕмĕрне.
Ăшшăн-ăшшăн кулса кĕтсе ил эс пире,
Телейпе, сывлăхпа эс çитсемччĕ 100е!

***2 ЫВĂЛĔПЕ КИНĔСЕМ, ХĔРĔ, МĂНУКĔСЕМ.***

## ТАВ САМАХĔ

Пирĕн юратнă мăшăра, аннене, хунямана, кукамая – Пăкăян поселокĕнче пурăннă Людмила Павловна Судаковăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн психоневрологи интерначĕн, Пăкăянти вăтам шкул коллективĕсене, тăвансене, кӳршĕсене, юлташсене чун-чĕререн тав тăватпăр.

***СУДАКОВСЕН ÇЕМЙИ.***


## МУЗ «Ибресинская ЦРБ»

**со 2 по 9 мая проводит «День открытых дверей» для инвалидов, участников ВОВ, вдов, тружеников тыла.**



Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.



*Главный редактор АЛИМАСОВ К. Д.*

Çĕнтерӳшĕн (За победу)

**Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР**

**Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6**

**ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, корреспонденты — 2-11-96, бухгалтерия, стол заказов — 2-11-97. АДРЕС ГУП “Вурнарский издательский дом”: 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.**

**Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.**

**Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП “Вурнарский ИД”. Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3219: чув. – 2376, русск. – 843. Зак. №**

**Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком Ⓟ**

**Срок сдачи в печать — 17.00**
**Сдан в печать в 10.00**

**Ответственный за выпуск Кузнецов Г. В.**